# Ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн асăмра юлĕ

**Республикăн музыка общественноçĕ кăçал талантлă музыкçă, композитор, дирижер, педагог, патшалăх тата общество деятелĕ, пирĕн ентеш, Çавалçырма ялĕнче çуралса ўснĕ Филипп Миронович Лукин çуралнăранпа 105 çул çитнине паллă тăвать.**




Ф. Лукинăн асăну каçĕнче.

М. СЕВАСТЬЯНОВ

Сарă кĕркуннен пĕр кунĕнче Чăваш наци библиотекин "Мерчен" музыка пўлĕмĕнче "Филипп Лукин — юрă лирикин ăсти" ятлă каç пулнă.

Савăнăçлă каçа наукăпа музыка общественноçĕ, студентсемпе вĕренекенсем, Шупашкарти "Трак ен" ентешлĕх членĕсем, композиторсем, юрăçсем, Филипп Мироновича лайăх пĕлнĕ çынсем, юлташĕсем, тăванĕсем, Трак тăрăхĕн çыннисем пухăннă.

Ăна Чăваш патшалăх филармонийĕн директорĕ Н. Казаков тата район администрацийĕн социаллă аталану тата архив ĕçĕн пайĕн ертўçи Р. Осипова уçнă. Мускаврa видеосалам янăраса кайнă — Ф. Лукин мăнукĕ Марианна Левитова пухăннисене аслашшĕне манман, чыс тата хисеп тунăшăн чĕререн тав тунă.

Ф. Лукин XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Раççей культуринче çутă, манăçми йĕр хăварнă. Хăй пурăннă чухне ăна "совет юррин корифейĕ" тенĕ. Филипп Мироновича С. Туликов, А. Новиков, М. Блантер, А. Пахмутова композиторсемпе пĕр рете лартнă. Вăл 800 ытла юрă кĕвĕленĕ, чăваш поэзийĕн паллă ăстисемпе — В. Давыдов-Анатрипе, А. Артемьевпа, А. Кăлканпа, Г. Ефимовпа, Ю. Сементерпе, Г. Красновпа, ыттисемпе тачă çыхăнура пулнă.

Каçра тухса калаçакансем пирĕн ентешĕн тата ытти ырă енĕсене палăртнă. Ф. Лукин юррисем наци музыкин ылтăн фондне кĕрсе юлнă.

Концерт программинче Ф. Лукинăн чи лайăх хор тата вокал произведенийĕсем янăранă.